И97
Ч-39406

Николай Ишентей

# ТӖРӖЛЛӖ ÇЫРУ ТӖЛӖНТЕРМӖШӖСЕМ



Национальная библиотека ЧР
4-039406

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К84.89(=Чув)
И 97
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Николай Ишентей

# ТӖРӖЛЛӖ ҪЫРУ ТӖЛӖНТЕРМӖШӖСЕМ

Повесть-юмах



Шупашкар
Чӑваш кӗнеке издательстви
2005

УДК 821.512.111—93
ББК 84 (2Рос=Чув)—4
И 31

4-39406
Национальная библиотека
Чувашской
Республики

**Николай Ишентей**

И 31 Тĕрĕллĕ çыру тĕлĕнтермĕшĕсем: Повесть-юмах. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2005. — 32 с.

Йăваш чунлă Йăвашук пĕчĕклех хăр тăлăх тăрса юлать. Шурсухал парнеленĕ хăнкăравлă, чĕнтĕрлĕ чĕн пиçиххин эрешĕсенче унăн йăх-несĕлĕсен кунçулĕ упранать иккен. Тупсăмне пĕлме вăл инçе çула тухать, Ваксум çĕршывне пырса çитет.

**УДК 821.512.111—93**
**ББК 84 (2Рос=Чув)—4**

© Николай Ишентей, 2005
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2005

**ISBN 5-7670-1386-1**

ПРОВЕРЕНО
2010

Пĕрремĕш сыпăк

# ÇĔРПЕ ТЎПЕ ХУШШИНЧИ СИНКЕРЛĔ ЁÇ-ПУÇ



Çĕрпе Тӳпе ытамĕнче, Парлак ту арки çинче пурăннă тет Йăвашук, ятсăр йăх-ăру ачи. Вăл хăр тăлăх пурăннă — хытхура пек хуçăлман, юр та, шыв та тăкăннă — вăл шывпа юхса кайман, тăвăлра та аптраман.

Ашшĕн вăйлă аллисем утьăкка ыватнине Йăвашук астăваймасть, амăш ăшшăн юрласа сăпкара сиктернине вăл асран та кăлармасть. Амăшĕн юрри ачашшăн чун çемми пулса янратчĕ, ачана хавас кӳретчĕ:

А-а-а! Ачашук
Тăшман хурри пулас çук.
Аçу кайрĕ хурала —
Хуса ярĕ хураха.
Вăл çĕнтерсе киличчен
Лăпкăн çывăр, ан шиклен.
А-а-а! Ачашук!

Кăмăллă та çепĕç юрă ачана ыйхă тĕнчине илсе кайрĕ. Ула чăпар ыйхă кайăкĕ сиктĕрме çине шăппăн-шăппăн вĕçсе анчĕ, çемçе мамăк çуначĕсемпе ача питне-куçне çупăрларĕ... Вара сăпкари ача тутлă та ырă тĕлĕк ţĕлленме пуçларĕ.

Вăл чечеклĕ вăрман уçланкинче пек. Ереветлĕ тĕрĕллĕ шурă кĕпе тăхăннă шурă сухаллă ватă асатте ăна çапла калать пек:

— Мăнукăм! Шанчăкăм! Пĕчĕкскерĕм! Эсĕ Çĕрпе Тӳпе халăхĕн тăхăмĕ пулатăн. Манăн ватлăх çитрĕ. Кайма вăхăт. Юлашкинчен пехиллем... — Шурсухал калаçнă майăн пилĕкĕнчи чĕн пиçиххине салтса Йăвашука çыхса ячĕ.

Чĕн пиçиххи енчĕклĕ, хăнкăравлă, чĕнтĕрлĕ. Чĕн хĕррипе

шăтăкласа ёлккен тĕрĕ тĕрленĕ, ярăм-ярăм ярăнчапа яру ярса çаварнă, шелттĕм-шелттĕм шерепепе укаласа пӳкленĕ.

— Çак пиçихxи санăн пулать. Кунпа çула çаварса пĕр кăшăла вăл çыхать. Çул кăтарттăр Тӳпекуç[1],— терĕ те куçран çухалчĕ шур кĕпеллĕ Шурсухал.

Йăвашук ыйхăран вăранчĕ. Çĕкленчĕ. Ак тĕлĕнтермĕш! Тĕлĕкре курнă ёнчĕ-пĕнчĕ пиçихxи чăн-чăнах унăн пилĕкĕнче пур! Тĕлĕкре пулман-тăр ку...

Ача астăвăмĕнче тата тепĕр ӳкерчĕк — ытла та хăрушши! — упранать. Темĕнле хурчка сăмсаллă этемккесем, чун илли эсреметсем пек, кĕшĕлтетсе килчĕç. Вичкĕн вĕçлĕ сăнăсем, хăртсем[2] хăррăн хăмсарчĕç... Йăрăс пӳллĕ амăшĕн шăнкăртаймак шӳлкеми чăнкăртатса саланчĕ, хурткуççиллĕ хушпăвĕ çĕре ӳксе таптанчĕ.

Йăвашук, сăпка анинчен тытса карăнтăкран пăхаканскер, юратнă амăшĕн куçĕ Ама çăлтăр пек ялкăшнине асăрхарĕ. Яланах çепĕç калаçакан хĕрарăм хальхинче çирĕппĕн те хаяррăн кăшкăрчĕ:

— Тăшман кулли пуличчен, эрлĕк тӳссе пурниччен хурах пуçне вăрăнтăр авăк çиллĕм — айпăлта[3]!

Йăрăс пӳллĕ амăшĕ ункă туса ухăнчĕ — шăмă аварлă айпăлта тăшман пуçне тăрăнчĕ. Унтан çав çиллес пурттах Хура ту тӳпемĕнче кăра çиллĕн çаврăнчĕ, тусан юпи çĕкленчĕ.

Ту чакăлĕнче мĕнле хăрушă ĕç пулса иртнине Йăвашук пĕлме пултараймарĕ, амăшĕн куçа йăмăхтаракан шурă шупăрĕ хысак çиййĕн вĕлкĕшрĕ те куçран çухалчĕ. Харсăр хĕрарăм ту хушăкне сикрĕ-ши е акăш пулса вĕçсе кайрĕ? Йăвашук сехре хăпасла хăраса ӳкрĕ. Вăл лапсăркка çăка айĕнчи пушăт кушеле пытанчĕ, чĕрĕп пек чамăртанса выртрĕ.

---

[1] Тӳпекуç — çăлтăр
[2] Хăрт — хĕç-пуртă
[3] Айпăлта — пĕчĕк пуртă

Иккӗмӗш сыпӑк

## КУШЕЛККЕ ТӖПӖНЧИ ҪУТӐ ЁМӖТ



Хура ту таврашӗнче пулса иртнӗ синкерлӗ ӗҫ-пуҫ хыҫҫӑн хастар халӑхӑн шӑпи мӗнле килсе тухнине никам та тӗп-тӗрӗс татса калаймӗ, мӗншӗн тесен хурахсем чул чӗреллӗ пулнӑран вӗсен кун-ҫул кӗнекине вутта персе ҫунтарнӑ, кӗлне ҫилпе вӗҫтернӗ. Йӑвашук ҫакна ҫеҫ лайӑх астӑвать: вӑл пытаннӑ кушеле Шурӑ Кашкӑр таҫта ҫӗклесе кайрӗ.

Ача хӑрушлӑхран хӑтӑлнине туйрӗ. Шурӑ Кашкӑр тӑшман мар, хӳтӗлевҫӗ пулнӑран Йӑвашук пуҫӗнче ҫутӑ ёмӗт ҫуралчӗ: «Эх, ҫак кушелккерен тухам ҫеҫ, арканнӑ ҫӗршывӑма ҫӗнӗрен йӗркелӗттӗм». Хайне малашне мӗнле шӑпа кӗтнине ҫак пӗчӗк чун пӗлмен ҫав. Пӗлме те пултарайман.

Тӗнче хаяр та аслӑ. Кушелккери тӑлӑх ача валли те Ҫӗрпе Тӳпе хушшинче пурӑнма вырӑн тупӑнчӗ. Вӑл тискер чӗрчун-семпе пӗрле кайӑкланса пурӑнчӗ.

Шурӑ Кашкӑр, ашшӗ пек, сунара илсе ҫӳрерӗ. Пурӑш, аслӑ пиччӗшӗ пек, сыхлӑха ӑна вӗрентрӗ. Куян, шӑллӗ выранне, шӑши-мӑшилле вылярӗ. Шурӑппа пек Кулюкка кӑлтӑртатрӗ ачапа. Чӗвӗл Чӗкеҫ йӑмӑкӗ пӗртте ҫумран хӑпмарӗ, чӗвӗлтетсе ҫӳрерӗ. Амӑшӗ кӑна пулмарӗ. Парлак ҫӗр унпа ылмашрӗ, тӑрантарчӗ, тумлантарчӗ, ешӗл аркӑ ҫине лартрӗ... Ҫӗр ырри вышкайсӑр тулӑх — ырӑ-ырӑ кӑмӑлне шӑнӑҫуллӑ ырҫа ҫук; ҫӳл тӳпе те аслӑ-ҫке — ҫӳллӗ-ҫӳллӗ маччине тӗрӗнекен чикмек ҫук.

Ача ӳсрӗ, вӑй-хал пухрӗ. Сарӑ ҫӳҫӗ хӑмӑрланчӗ, кӗлетки те патварланчӗ. Кӗпи тӑварланнӑран унтан-кунтан ҫурӑлчӗ, йӗмӗ йӑлтах ҫӗтӗлчӗ. Ҫавӑнпа пур чӗрӗ чун кускалать ҫеҫ ун тавра.

Качака юрла-юрла пурҫӑн чавса ҫип арлать. Ватӑ Упа ҫип кумса шартлаттарсах пир тӗртет — пасар пирӗ темелле. Чӗрӗп кӗпе-йӗм

ҫӗлет — уяв тумӗ пулмалла. Килӗнтеш пек кайӑксем, чӗвӗл-чӗвӗл саслисем, пулчӗҫ тӗрӗ ӑстисем — кӗпе умӗ тӗрӗллӗ, арки-ҫанни ҫырулла. Пӑрантӑк та пӑрӑнмарӗ: пушӑт чӗлчӗ, ярӑмларӗ, хуҫса пачӗ йӑпӑрттин вун ик пушӑт ҫӑпати... Туслӑ енлӗк тӑлӑха пӑрахмарӗ шырлӑха — тумлантарчӗ ырлӑха каламасӑр аюкка.

Унтанпа нумай шыв юхрӗ. Сӗм вӑрман пайтах кашларӗ, ҫулҫӑ сарчӗ те ҫаралчӗ. Ача ҫитӗнсе ҫитрӗ, маттур йӗкӗт пулса тӑчӗ. Ҫӗрпе Тӳпе хушшинче ирӗккӗн пурӑннӑран кӑмӑлӗ унӑн ҫӗрӗнни пек ырӑ, тӳпенни пек аслӑ пулчӗ. Йӑваш-йӑваш сасӑпа сапӑррӑн калаҫнӑран йӗкӗте пур чӗрчун Йӑвашук тесе ят пачӗ. Ҫирӗп, вӑйлӑ пулнӑран ячӗ кайрӗ таврана: «Ах, ачи пӑхма йӑваш пек. Йӑвашши — йӑвантарать!»



### Виҫҫӗмӗш сыпӑк

## МӖН КАЛАСШӐН ӐС ПУХХИ — ЁНЧӖ-ПӖНЧӖ ПИҪИХХИ?

Хайхи-майхи Йӑвашук хуллен ҫын шутне кӗрет. Кун кунлать те ҫӗр ҫӗрлет. Хӑй ӳркевсӗр пулнӑран пурнӑҫне пит ӑнтарать, туприне те хатӗрлет. Пурте пур ун: хӑтлӑ ҫурт, выльӑхчӗрлӗх, ырӑ вут. Тӗрлӗрен ӗҫме-ҫиме шӑнӑҫмасть те пӳлмине. Ӗҫпуҫне аван пӗлет — пӑлапа вутта ҫӳрет, кашкӑра та йӗнерлет. Ырӑ кӑмӑллӑскерне пыл хурчӗсем саваҫҫӗ, тара тытнӑ тесе мар, тусла пулӑшу парасшӑн ырми-канми ӗҫлеҫҫӗ. Ырӑ ӗҫ пилсӗр ӑнас ҫук — ӗҫлемесӗр пуяс ҫук. Ҫапла аслӑ тӗнчере, Ҫӗрпе Тӳпе хушшинче, тӑрӑшуллӑ Йӑвашук пурӑнать улпут пекех. Никама та пӑхӑнмасть, хур шухӑшпа пурӑнмасть: хӑй мулӗпе хӑй хуҫа, ҫӗршывӗнче — хӑй патша.

Ах анчах, яш йӗкӗте пурпӗрех темскер ҫитмест. Мӗн ҫитмест — тӗшмӗртеймест. Кӑшттӑм пушансан ӗҫрен, шухӑшлать те тунсӑхлать, тунсӑхлать те шухӑшлать... Ҫавӑнпа Йӑвашука пыл та ҫу пурнать тесе каламашкӑн майӗ ҫук.

Пурӑнма пӗччен кичем. Пыл та тутлӑ мар иккен тунсӑх пуснӑ чух пӗччен. Э-хе-хей. Пурнӑç-и ку е йӳтетмӗш аптрашки? Хайхи тӑлӑх Йӑвашукӑн каçсерен ыйхи те вӗçрӗ, кӑкӑртан тем шелсӗр хӗсрӗ...

Йӑвашук пӗр ирхине çӗршывне тӗрӗслеме кулленхи ӗçпе тухать. Кашкӑра йӗнерлесе вӑштӑккин çеç утланать, яртлаттарса чуптарать. Шӑкӑрчаллӑ, тӗрӗллӗ, ӗнчӗ-пӗнчӗ пиçиххи кӗвӗллӗ сас кӑларать. Мӗн калать вӑл — кам пӗлет? Те юрлать, те йыхӑрать... Юлан кашкӑр чарӑнать. Йӑх аслашшӗн парнине Йӑвашук алла илет — тӗрӗ çырӑвне йӗрлет, вуламашкӑн сӗмленет. Хӑ, чӑн-чӑн пуç ватмӑшех — нимӗн те вӑл тӗшмӗртмест: пӑт-пӑт тумлас йӑлтӑркки вӑрттӑнлӑхне уçса памасть, ян-ян саслӑ хӑнкӑравӗ кирлӗ хурав каламасть.

Кун кунларӗ, çӗр çӗрлерӗ апӑрша ачи çапла — йӑх-несӗлӗн çырӑвне пурпӗрех вӑл вулаймарӗ. Çӗнӗрен хӗвел тухса çӗн куна ӗлккен сӑн кӗртрӗ. Чим, çыру тӗрри çинче те хӗвел кӳлепи курнать. Хай ӳкерчӗк варринче Йӑвашук хайне курать: икӗ ура, икӗ алӑ, çичӗ шӑтӑклӑ çăмха тайӑлнӑ хӗвел енне... «Ха, çăмха!» — икӗ аллипе пуçне хыпаларӗ çăмрӑк çын. Çав тери савӑннӑран сиккелерӗ тӑрӑстин. Мӗнле савӑнмӑн ара — тупрӗ мӗн шыранине: аслӑ çутӑ амӑшне пуç тайма хушать çыру.

Акӑ ӗнтӗ Йӑвашук, уйӑх çиччӗ çаврӑнсан, чӗн тӗрриллӗ ӑс пуххин вӑрттӑнлӑхне яр уçать — йӑх аслашшӗн пехилне сӑмаха сыпӑнтарать, сӑмахран пуплев тӑвать.

Эпир те, хиселлӗ вулаканӑмсем, çак тӗлӗнтермӗш пиçиххин ярӑнчаллӑ-ярӑмлӑ тӗрӗ пайрӑмӗсене пӑхса илер пӗр авӑк. Тен, вулама май килӗ-и?



Ӳкерчĕк тупсăмĕ е йăх аслашшĕн пил çырăвĕ: «Хĕвеле пуç тай та инçе çула тух. Вутра вут кайăкĕ пул, шывра шыв кайăкĕ пул, ыр сунанпа йăваш пул, хаяр сунанпа арçури пул. Çулта-йĕрте тус аслă, кĕрешӳре чыс аслă. Тӳпекуçра — куç уççи, килĕшӳре — кил ăшши. Çапла пулнă ĕмĕртен, пиллĕх Çĕрпе Тӳперен».

### Тăваттăмĕш сыпăк



## ĂÇТА КАЯТĂН, МĂН ТĔВЕ?

Йăх аслашшĕ пехилне Йăвашук ăша илет — çырура мĕн калани пултăрччĕ кун-çул тĕллевĕ. Пĕр янкăр кун Хĕвеле, аслă çутă амăшне, пуç тайса çула тухать. Çăлтăр çулĕпе утать. Вăрман витĕр, хир тăрăх пырать пĕлĕш Йăвашук. Пăхма сукмак сурпан пек, анчах унăн вĕçĕ çук. Сăрт-ту урлă каçсассăн çеçен хире çул выртать.

Шăрăх. Пăчă. Вăй чакать. Сывлăш çавăрас тесе Йăвашук канма ларать. Ăнсăртран курах каять — курпун çурăм — Мăн Тĕве çулпа иртсе пынине. Сăмах хушать Йăвашук:

— Ăçта каятăн, Мăн Тĕве?

— Пĕчĕк Тĕве йĕресрен ачашлама каятăп.

— Пĕчĕк Тĕве ăçтарах?

— И-и, этемкке, этемкке! Унта çитес тесессĕн çичĕ кун та çичĕ каç пуш хир тăрăх каймалла.

— Çула хăйăр хӳсессĕн?

— Сукмак хывăп — якатăп, ташла-ташла çитетĕп.

— Е шыв ĕçес килсессĕн?

— Тутана çула-çула ăш хыпнине ирттерĕп.

— Е çул çинче вăй пĕтсен?

— Çупкăм-çупкăм чăтăмлăх пухăп-пухăп — çитетĕп.

— Э-э, Мăн Тĕве, Мăн Тĕве! Вăхăт нумай иртрĕ-çке — Пĕчĕк Тĕве выçăпа аптăраса ӳкрĕ пуль?

— Ăна валли кăшăлпа чăкăт парса хăварнă. Выçă юлмĕ — чăткалĕ.

— Ну, Мăн Тĕве, Мăн Тĕве! Ман та каймалли инçе — чăтăм епле çитерсе çитес çĕре çитес-ши?

— И-и, этемкке, этемкке! Тӳсĕмлĕхе тӳрлетме кучченеç пур сан ятпа — сарă чăкăт кăшăлĕ. Ăна ăша ярсассăн çитес çĕре çитетĕн.

Курпун çурăм — Мăн Тĕве — çул çӳревçĕ пĕлĕше чăкăт пачĕ кăмăлтан. «Килтен тухни вунă кун. Пĕчĕк Тĕве халиччен кашта çӳллĕш ӳсрĕ пуль, каялла вăр-вар çитиччен вĕрлĕк çӳллĕш пулать пуль», — тесе кăна хăварчĕ, хăй çулĕпе уттарчĕ. Йăвашук ырă тĕвене тав тума çеç ĕлкĕрчĕ.

Сарă чăкăт кăшăлĕ ырă сунса панăран пулчĕ çул çӳревçĕшĕн чун эмелĕ вырăнне. Ăна çисен Йăвашук вăй-хал кĕнине туять, тепĕр хут çула тухать. Кун кунлать те çĕр çĕрлет — çăлтăр çулĕпе çӳрет.

Хăш чух Аслă Тӳпере вут-çĕлен вăйă вылять. Ту чакăлне çитсессĕн хура пĕлĕте сирет те ярăм-ярăм вут ярать, кассăн-кассăн хĕм сапать. Ялт-ялт тăвать, чалт çиçет, кĕлтипе çулăм ӳкет. Вут хаярĕн вут чĕлхи сăнă пулса тăрăнать, чул хысакне аркатать. Йăвашук вутран тухать, палăртнă çулпа утать.

Хăш чух Аслă Тӳпере асар-писер Аслати çĕр çĕмĕрсе алхасать. Ылмаш уя çитсессĕн тăхлан пĕлĕте сирет те шăпăр-шăпăр-шăпăртăк! ывăçласа пăр тăкать. Шыв хаярĕн шыв пички шалт-тин ӳксе йăванать — йĕре çумăр ислетет, аслă шыва пухăнать. Йăвашук чăмса тухать, палăртнă çулпа утать.

Хăш чух тинĕс леш енчен Ашапатман ӳхĕрет, вĕрет, сурать, шăхăрать. Ăншăрт хирне çитсессĕн тĕнче тĕннине уçать те ăвă кăмпипе тĕтĕрет, çиллес кăмăл еккипе ним мар чуна кăларать. Çил хаярĕн çиллипе тăвăл тухса тустарать, кĕреш юман йăванать. Йăвашук ӳкмест — чăтать, çиле хирĕç талпăнать.

Пиллӗкмӗш сыпӑк

## ИК ТЕКЕРЛӖК ВӐЙӐ ВЫЛЯТЬ, ЮПАХ ТИХА ШЫВ ЁҪЕТ



Кун иртет те, каҫ пулать. Каҫ иртет те, ир пулать. Ҫӑлтӑр саланать. Уйӑх та шупкаланать. Ҫул ҫӳревҫӗ асӑрхать: ҫутӑ кӳлӗ, ешӗл уй — кӑмӑллӑ, киленӗҫ вырӑн. Кӳлӗ тавра чечексем тӑнӑ ешӗл кӑшӑла, йӗкӗте канма чӗнеҫҫӗ. Чӗвӗл-чӗвӗл кайӑксем ҫӗнӗ кун юрри юрлаҫҫӗ.

Йӑвашук канма ларать. Ах анчах, пӗччен ҫӳревҫӗн тунсӑх пуснӑ кӑмӑлне чечексем те сирейменҫҫӗ, кайӑксем те уҫайманҫҫӗ. Каччӑ шухӑшлӑн сӑнать кӗмӗл пек шыва темччен... Тӗкӗр шыв йӑлтӑртатса унӑн кӗре сӑн-питне сенкерлетсе кӑтартать.

Ик текерлӗк ҫыранта вӑй вылятчӗҫ савӑнса. Тӑпӑр-тӑпӑр-тӑпӑртӑк тунӑ сасӑ илтӗнчӗ. Юпах тиха курӑнчӗ, шыв ёҫмешкӗн пикенчӗ. Кӳлӗ хӗрринчи вӑйӑҫсем — икӗ хӳхӗм текерлӗк — вӑййа тӑсрӗҫ малалла, юпах тихан ик енне йӑлтти-ялтти ҫывхарчӗҫ, шывпа сапрӗҫ, алхасрӗҫ чӑртӑкпа пӗрӗхтерсе. Юпах тиха ӳпкевсӗр — шыв ёҫет, ёҫет, ёҫет... Чӑтма ҫук ӑш хыпнӑ-ҫке, шывсӑр пурнӑҫ ҫуккӑ-ҫке.

Ик текерлӗк сасартӑк вӑйӑ выляма чарӑнчӗҫ. «Чее! Чее! Чее вӑл», — тесе сасӑ пачӗҫ те хӑмӑшлӑхра ҫухалчӗҫ. Ырӑ марра сисрӗҫ пуль. Ак тамаша! Чӑнах-мӗн текерлӗксем систерни: шӑппӑн-шӑппӑн шӑвӑнса кайӑк патши Арӑслан шыв хӗррине ҫывхарчӗ, хай тиха енне ҫывхарчӗ.

Кайӑк патши Арӑслан хатӗрленчӗ туллама айванкка янавара. Ҫакна курчӗ Йӑвашук. Йӑх-ӑру ҫырӑвӗнче мӗн каланине манман вӑл: «Ыр сунанпа пул йӑваш, хаяр сунанпа — арҫури». Ҫак хастарлӑх вӑййӑмӗ ун патвар кӗлеткине чӑмӑр евӗр хытарать. Пилӗкри пиҫиххине вӑл салтать те йӑлмаклать. Куҫа хупса иличчен Арӑслана нӑхталать, ун ҫине сиксе ларать. Ай турух, ачу-пачу!

Çын ёренкинчен тухать. Те арçури, те шуйттан çавра çил пек çаврăнать. Тусан юпи хăпарать...

Çутă кӳлĕ хĕрринче — çуйхашу, тĕрткелешӳ. Те сехмет ку, те камит. Арăсланĕ пуç ухса ӳкересшĕн юланçа, чĕввен тăрса тулхăрать. Каччă ларнă çыпçăнса — ним тусан та ӳкес çук. Кайăк патшинчен шикленмĕç Пихампар таврашĕсем. Ши! те ши! çеç шăхăрать — хăлхана çурасшăн-ши? Тапхăр-тапхăр тулашсан Арăслан тăп чарăнать. Ыр-усала çĕнме çук. Парăнма тивет çынна. Тархаслать Йăвашука:

— Яр мана эс, Йăвашук. Тек хур кӳмĕп юпаха.

Çул çӳревçĕ килĕшет, Арăслана вĕçертет. Çутă кӳлĕ хĕрринче каллех лăпкă та тӳлек. Ик текерлĕк çыраҫа вăййа тухрĕç тепĕр хут.

Юпах тиха пуç тайса хăтарнишĕн инкекрен Йăвашука тав тăвать: «Ырă çыншăн пулмăп ют, пулăп эпĕ Ырă Ут».



**Улттăмĕш сыпăк**

**ÇУЛТА-ЙĔРТЕ**
**ТУС АСЛĂ,**
**КĔРЕШӲРЕ ЧЫС АСЛĂ**

Йăвашукпа туслашсан Ырă Ут çапла каларĕ:

— Манăн урасем тăваттă. Эпĕ хытăрах чупатăп. Çавăнпа та, Йăвашук, ман çине утлан та лар. Çитĕпĕр çитес çĕре пĕр чăрмавсăр та вăр-вар.

Унччен пулчĕ-и, кунччен-и, ытарайми икĕ тус — Йăвашукпа Ырă Ут — каллех çула тухаççĕ. Тăпăр-тăпăр-тăпăртăк, ут чуппипе çул чуппи пĕр кĕвĕллĕн янрарĕç. Çеçен хир çулĕ — аслă çул — куç ытамне кĕреймĕ, ут утланса тухсассăн ут уринчен иртеймĕ.

Хура чаршав карăнать — ик тус канма чарăнать, шурă чаршав карăнать — çӳрев каллех тăсăлать. Ырă Ут çултан юлмасть, яртлаттарса чуптарать, тимĕр тĕкмесем урлах сикĕм туса ыткăнать.

тăратрĕ, тĕлĕннипе шак хытрĕ. Икĕ карта — ик тĕнче тăрать çулăн ик енче. Сылтăм енче Чыс карти: ĕречĕпе шăкăрин, пичке-ырçа лартнă пек, туслă йыш тăра парать. Пăхма туслă та, анчах малта кашнин майрака пур, сенĕк евĕр шĕвĕрри; айĕсенче енчĕк пур, сĕтпе-çупа каранни. Йăвашука курсассăн: «Кам ку? Кам ку амукка? Ыр сунан е усалкка?» — тесе сасă параççĕ, ухлĕм курăк çиеççĕ. Хайхисем чыса упраççĕ: ырă сунансем пырсан тутлă сĕтпе тăрантарĕç, тĕрлĕ усал хăнана майракапа тăрăнтарĕç.

Сулахайра Шăм карти — шак-шак шăллă шакалсем картал-анса тăраççĕ, Чыс картине куçлаççĕ. Шăрт тăратса, шăмарса пурте шăмă кăшлаççĕ. Ăнсăртран Чыс картинчен мăкла пăру, Мутĕркке, йалт-ялт сиксе-выляса тухрĕ карта тулашне. Çакна кĕтнĕ шакалсем кĕпĕр! тăчĕç ун тавра, шăлĕсене шаккаççĕ, çурса тăкма шутлаççĕ.

— Му-у! Мур эшкерĕ, ан васка! Пулĕ сире майрака! — тухрĕ хыттăн мĕкĕрсе Чыс картинчен Мук вăкăр. Каçрашка майраки-сем шак-шак Шăмă картине енчен енне ывăтрĕç. Анчах пĕччен мĕн тăвăн. Шакал вырăнне шакал пур — кашнин асав шăлсем пур. Арканмарĕ Шăм карта, çирĕпскер вăл, тупата. Халтан кайрĕ Мук вăкăр:

— Му-у! Мур эшкерĕ! Пилсĕр йăх! Чыс карти тулашĕнче шакалсем çеç хĕвĕшеççĕ, — терĕ те хашка-хашка ват юман çумне сĕвенчĕ.

Мăкла пăру Мутĕркке тыткăнра тăр-тăр чĕтрет. «Çăлăнăç ăçта-ши?» — тет. Йăвашук çакна курать. Ăс пуххи çырăвĕнче калани аса килет: «...Çулта-йĕрте тус аслă, кĕрешӳре чыс аслă». Çак пилпе çунатланса Йăвашук утне хистет, Шăм картине сиктерет. Куçа хупса иличчен хайхи-майхи пăрăва çăлать асав шăлсенчен, Чыс картине тавăрать.

Карта пуçĕ, Мук вăкăр, çакна пачах кĕтменччĕ — тĕлĕннипе тăп тăчĕ. Шĕвĕркке майракине енчен енне сулларĕ. Чыс тума та манмарĕ вăл маттур çул çӳревçе:

— Мухтав сана, Йăвашук! Карта чысне упрарăн. Чыслă çыншăн Чыс карти ялан пулĕ яр уçă.

Чыс картинчи Мук вăкăр унтан вăртах çаврăнса, сас хăпартса каларĕ:

— Мур илесшĕ, Йăвашук, майрака сан мĕншĕн çук? Пилсĕр

йаха мёнпеле ывӑтайӑн авӑсса? Пёлетён-и, апӑрша, мӑйрака упрать чыса!

Пёр тёлёнчё, пёр хёрхенчё Йӑвашука Мук вӑкӑр:

— Чыслӑ этеме юрать-и мӑйракасӑр ҫӳреме? Мур ҫитменлёхне халех пётеретпёр, тусӑм. Му-у!

Ҫынна чунтан ырӑ сунса Чыс картинчи Мук вӑкӑр каҫрашка мӑйракине парнелерё йёкёте. Йӑвашук хай парнене хапӑлласа йышӑнчё. Мӑйракан шӑрке пуҫне ҫёҫёпе каскаласа питё меллён шӑтарчё. Вӑр ҫавраки шӑтӑка аслӑлатрё, якатрё. Чёлёх чикрё те хытарчё. Мёскер пулчё? Пёлтёр-и? Ку — ян сасӑллӑ кавал.

Йӑвашук майне пёлет: ухӑ турё, карӑнтарчё, кавалне ян янраттарчё. Уй-уй урлӑ, ту урлӑ кӑрал кёвви ян кайрё. Кавал сассине илтсен шак-шак шӑллӑ шакалсем: «Тёкёрҫё килчё — пётрё пуҫ!» — терёҫ те хӑре хёстерчёҫ. Йӑвашукӑн кӑмӑлё ырӑ, аслӑ, ҫавӑнпа вёҫертмерё ҫёмренне:

— Пилсёр йах, тасалӑр, — терё, — Чыс карти таврашёнчен!

Ҫакна кётнё шакалсем: «Сывӑ пултӑр пуҫ-хӑре!» — терёҫ те тарса ҫухалчёҫ.

— Пархатарсӑр сасӑран чи пархатарсӑрри — шакалӑн, — пуҫне пӑрчё йёрёнсе карта пуҫё — Мук вӑкӑр.

— Ҫёкленӳллё сасӑран чи ҫёкленӳлли — кавалӑн, — хуравларё Ырӑ Ут. — Малашне кун-ҫулӑма ҫынпа пайлӑп эпё, вӑт.

Унччен пулчё-и, кунччен-и, тӑпӑр-тӑпӑр-тӑпӑртӑк! янӑрарё ҫул ҫемми кавалпа пёр кёвёллён.

**Ҫиччёмёш сыпӑк**

## АВАН-И, ВАКСУМ — ЧАП-СУМ ҪЁРШЫВЁ



Ҫаврӑм-ҫаврӑм кун ҫаврӑмё килет, каять — тӑхтамасть. Йӑвашукпа Ырӑ Ут, ҫырура каланӑ пек, шӑпа палӑртнӑ ҫулпа ыткӑнаҫҫё малалла юртӑпа та сиккипе. Кун килет те, кун каять. Ҫул килет те, ҫул каять. Мён чухлё вӑхӑт иртнине

ёнтӗ тӗрӗс кам калать? Кун сумлама сумҫӑ ҫук, инҫе ҫулӑн вӗҫӗ ҫук.

Акӑ пӗр тӑп-тӑрӑ ир, Ҫутӑ Амӑшӗ хир урлӑ ӑшшӑн кулса килнӗ чух, юлан ут тӑп чарӑнать. Чул хӳме ҫула картлать. Йӑвашук ҫӗре анать, ут ҫаран ҫине каять.

— Ку мӗнле тӗнче чикки, амутке аптӑрашки? — тӗрлӗ иртен-ҫӳрентен Йӑвашук ыйтса тӗпчет.

— Ку — Ваксум — тӗнче мухтавӗ, чапӗ те мӑнаҫлӑхӗ. Ваксум тесе калани «чап-сум» тенӗн янӑрать. Ҫакӑ аслӑ ҫӗршывра ҫӗр-ҫӗр халӑх пурӑнать, сумсӑр пурлӑх упранать, — теҫҫӗ пӗрисем хавассӑн.

— Амак ҫапманскерсен ҫӗршывӗ вӑл. Ӗҫӗ-хӗлӗ ун ҫур сумлӑх, сас-хура тӑвать пин сумлӑх, — теҫҫӗ теприсем йӳҫеккӗн.

Йӑвашук иккӗленет — кам тӗрӗссине калать? Унтан малалла иртет, хӑй курса пӗлме шутлать. Аслӑ хапхаран кӗрет. Хапхаран кӗрсессӗнех ҫул тӑваткӑлне курать. Ҫав тӑваткӑл варринче чул кӳлепе курӑнать. «Ку мӗнле мӑн чул катрамӗ? Палӑк е чул катемпи?» — ҫул ҫӳревҫӗ шухӑшлать. Палӑк пулсан — паллӑ ҫын, ӑна сума сумалла. Катемпи — кӑшт айванкка, пурпӗр пуҫа таймалла. Мӗншӗн тесен иккӗш те ҫут тӗнчере кирлӗ-ҫке, пӗри ҫул-йӗр кӑтартать ҫынсем ҫӗтсе ҫӳресрен, теприуй-хир хураллать ҫерҫи сӑхса каясран.

Ҫул ҫӳревҫӗ ҫывхарать. Чул кӗлетке хускалать, аллипе ҫул кӑтартса кирлӗ пӗлтерӳ парать:

— Паян Ваксум ҫӗршывӗнче уяв пулать. Каппайшах патша ҫӗнӗ тум чыславне йыхӑрать. Пурин те Янтрама Тӳрем варрине тухмалла.

Утрӗ пӗлӗш Йӑвашук ҫул юппинчи чул палӑк ҫул кӑтартнӑ еннелле. Акӑ патша керменӗ, ҫӳллӗскер те ҫутӑскер. Кермен умӗнче — Янтрама Тӳрем. Урлӑ пӑхсан урамӗ урӑм-сурӑм сарлака, тӑрӑх пӑхсан тӑсмака — куҫ ытамне илме ҫук. Янтрама Тӳрем варринче — Ташлама Сӑртлам. Сӑртлам ҫине улӑхсан ташламасӑр чӑтаймӑн, такӑрлатнӑ йӗтем пек. Янтрама Тӳрем тулли тӗрлӗ халӑх хӗвӗшет: сылтӑм енче — чаплисем, сулахайра — сумлисем. Чапсӑр-сумсӑр этемсем — Кайри Каюкассисем — сӗнксе тӑнӑ хыҫалта. Пурте, тӳрем таллкишпех, тӗлӗнтермӗш кӗтеҫҫӗ.

Тинех кётнĕ вăхăт çитрĕ, тĕлĕнтермĕш пуçланчĕ. Питлĕх çапкăч Тункăрхун якăлтик кĕвви янратрĕ, пăнтăр-пăнтăр Тукмакбаш параппанĕпе панлаттарчĕ, ӳрĕк кăмăла çĕклерĕ.

Хура халăх кĕпĕрин икĕ енне сирĕлчĕ. Ташлама Сăртлам çине Ваксум патши Каппайшах сумлăн тухрĕ ярăнса. Патша хыççăн шăкăрин унăн шаннă çыннисем: Йăпăр Куçлă Йăпăлтик, Ахрăм Саслă Ахăлтик, Пăшатан пек Шăршпĕлен, Çиçкĕнчĕк, Çĕвĕç, Ăшталанчăк Ăшкалькин тата ытти кĕрĕс-мерĕс кĕлеткесем — пурте танлăн та мăнаçлăн карталанса утаççĕ, Каппайшахăн çĕн тумне ырми-канми ырлама Сăртлам çине тухаççĕ.

Патша çĕнĕ кĕрĕкпе. Кĕрĕкĕ ахах-мерченлĕ, пĕрмечеллĕ-шерепеллĕ, йăлтăркачлă-аркăллă. Ку кĕрĕке çĕлетме пайтах тăкак курнă пуль.

— Аслă патша кĕрĕкĕ пĕртте ахаль кĕрĕк мар — пĕтĕм çĕршыв хӳтлĕхĕ, — ахăлтатрĕ Ахăлтик. Патшан шанчăклă çынни сăмахпа, ахрăм саспа ăслă шухăш каласа пĕтĕм хура халăха тĕлĕнтерес терĕ пуль.

— Кĕрĕке йӳле ярсан пурте хӳтлĕх тупăпăр, — йăпăлтатрĕ Йăпăлтик, патша çумне йăпшăнса, кĕрĕк арки пĕркенсе.

Ăшталанчăк Ăшкалькин шухăшне пĕлме пулмарĕ: Каппайшах патша тавра кускаларĕ апăрша сăмахне çăта-çăта.

Йăвашук та патша тумне сăнаса пăхрĕ. Акă мĕн асăрхарĕ вăл: кĕрĕк чăн та чаплăскер, хаклă тиртен çĕлетнĕскер: арки вăрăм, сарлака — чыславçăсем пĕркенĕç, анчах сумсăр этемсем, Кайри Каюкассисем, хӳтлĕх мĕнне чухлаймĕç. Темшĕнçке кĕрĕк çухи кăшттăм чалăшрах тăрать. Йăвашук ăнланаймарĕ: чалăш суха çĕвĕç çитменлĕхĕ-ши е чаплану манерĕши — кун пирки уççăн калакан пулмарĕ.

Çак вăхăтра халăх хушшинчен: «Сумсăр Сăвăç сăмах илесшĕн! Сумсăра сăмах!» — тесе кăшкăрашни илтĕнчĕ. Анчах кĕрĕс-мерĕс кĕлеткесем Сумсăра Ташлама Сăртлам çине хăпартмарĕç, унăн уçă сассине вара пурте илтрĕç:

Ваксум патши пин сумлăх
Çĕн кĕрĕк тăхăнать,
Чапрас çухи çур сумлăх
Ятне-сумне ярать.

Чыславҫӑсем курмаҫҫӗ
Ҫӗн тум пӑсӑккине —
Ӑҫтан пӗлсе тытайччӑр
Патшалӑх ҫул-йӗрне?..

Сумсӑр Сӑваҫ пуҫланӑ сӑмахне каласа пӗтерейменрӗ — ӑна кӗрӗс-мерӗс кӗлеткесем хупӑрласа илчӗҫ, читлӗхе хупрӗҫ.

— Мӗншӗн ҫӗвӗҫ айапӗшӗн сӑвӑҫа читлӗхе хупрӗҫ? — ыйтрӗ Йӑвашук юнашар тӑракансенчен. Уҫӑмлӑ хурав никам та памарӗ. Ҫул ҫӳревҫӗ, Ҫӗрпе Тӳпе ытамӗнче ирӗккӗн ӳснӗскер, кунта мӗн пулса иртнине ниепле те тӗшмӗртме пултараймарӗ.

Чыславҫӑсем Каппайшах чысне ҫӗре ӳкме памарӗҫ. Ҫӗнӗ тум чыславӗ малалла пычӗ, анчах ырлавҫӑсен ырлӑхӗ нумая пымарӗ. Халӑх умне кӗреш кӗлеткеллӗ Упа ҫын тухрӗ те чыслава чарса лартрӗ. Упа ӑраттин шик пулас ҫук, кун пирки никам та иккӗленмерӗ. Хӑюллӑ та мӗкӗреш сасӑ тӳрем талккӑшпех саланчӗ:

— Эсӗ, Ваксум патши, ман асатте тирне сӳсе кӗрӗк ҫӗлетрӗн. Халӗ унпа каппаясшӑн курнӑҫланатӑн. Ҫакӑ сана чыс кӳрет-и?.. Чапрасланнӑ чыславра тӗрӗс сӑмах илтме ҫук. Сире, ҫӑпата ҫӑварсене, чыслав мар, чышкӑ кирлӗ!..

Упа ҫак сӑмахсене каланӑ чух алӑ арманӗ пысӑкӑш чышкипе чыславҫӑсене юнарӗ. Хура халӑх кӗр! кӗрлерӗ. Ҫав вӑхӑтра кӗрӗс-мерӗс кӗлеткесем Упаҫа ҫавӑрса илчӗҫ, алли-урине пӑркӑчлама пуҫларӗҫ.

Упа ҫын ҫак хӑрушӑ самантра хӑй упа ӑраттинчен тухнине туйса илчӗ пулас — чӑн-чӑн упалла кӗрешрӗ вӑл кӗрӗс-мерӗс кӗлеткесемпе. Пӗрне ҫӗклесе ҫапрӗ, теприне пуҫхӗрлӗ чикелентерчӗ, виҫҫӗмӗшне Ташлама айне чӑмтарчӗ...

Мӗн тӑвӑн: вӑйли валли вӑйли пур. Кӗрӗс-мерӗс кӗлеткесем харӑссӑн тытса Упаҫа читлӗхе хупрӗҫ-хупрӗҫех.

Ку пӑтӑрмах та Ваксум патшин чысне ҫӗре ӳкерейменрӗ. Чыславҫӑсем ҫӗнӗ курав йӗркелерӗҫ, Каппайшах хулӗ ҫине тӗрӗллӗ ал шӑлли пырса выртрӗ.

Тӗрӗллӗ ал шӑллие курсан Йӑвашукӑн пӗтӗм ӳт-пӗвӗ сӳлесе илчӗ. Чим-ха, чим. Мӗншӗн пӑлханать вӑл? — Ал шӑлли ҫинчи тӗрӗ паллисем унӑн чӗн пиҫиххинчи тӗрӗ ӳкерчӗкӗсене аса

илтерчӗҫ. Эппин, Ваксум ҫӗршывӗнче унӑн йӑх-несӗлӗсем пур. Тӑвансен ҫӗршывӗ ку!

Йӑвашук пӑлханнипе чӗтре-чӗтре ал шӑллине тӗсесе пӑхрӗ. Хӗвел палли те пур. Вӑл Ҫӗрпе Тӳпене пӗр ытама илет. Тӳпекуҫ ҫӑлтӑра та асӑрхарӗ каччӑ.

Ҫав ҫӑлтӑр Аслӑ Хутшӑнӑва кӗме чӗнет. «Ҫулта-йӗрте тус аслӑ, кӗрешӳре чыс аслӑ», — вуларӗ ҫул ҫӳревҫӗ ӳкерчӗклӗ ҫырӑва. Унӑн пусӗнче хӑюллӑ шухӑш ҫуралчӗ: «Халех, ҫак самантрах, Каппайшахпа кӗрӗс-мерӗс эшкере тивӗҫлӗ вырӑна лартмалла».

**Саккӑрмӗш сыпӑк**



## ХӐЮЛЛӐ ШУХӐШ ПУРНӐҪА КӖРЕТ, Е КАППАЙШАХ ХӐЛХА ҪУПСА ТАШЛАНИ

Йӑвашук хура халӑх хушшинчен тухрӗ те Ташлама Сӑртлам еннелле темиҫе утӑм турӗ. Кӗрӗс-мерӗс кӗлеткесем унӑн ҫулне пӳлчӗҫ.

— Кам эсӗ? — ыйтрӗ Ӑшталанчӑк Ӑшкалькин.

— Витӗркуран, — пулчӗ хурав.

Пӑшатан пек Шӑршпӗлен Йӑвашука шӑршласа ҫаврӑнчӗ:

— Нимӗнле хӗҫ-пӑшал тавраш̆ӗ те ҫук — пурте йӗркеллӗ.

— Витӗркуран, эсӗ Каппайшах патшан тӗреллӗ ал шӑллине витӗр курса хак пама пултаратӑн-и? — кӑсӑкланса ыйтрӗ Ҫиҫкӗнчӗк Ҫӗвӗҫ.

— Пултаратӑп.

Кӗрӗс-мерӗс кӗлеткесем икӗ еннелле сирӗлчӗҫ. Йӑвашук Ташлама Сӑртлам ҫине, чап-сум тӗпелне иртрӗ. «Патшана пуҫ таймалла», — пӑшӑлтатрӗ Ӑшталанчӑк Ӑшкалькин ӑна хӑлхаран. Йӑвашук итлемерӗ — тухӑҫалла ҫаврӑнса Хӗвеле пуҫ тайрӗ. Унтан чӑн-чӑн витӗркуранла Каппайшаха куҫран тинкерчӗ.

4-39406

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

— Ваксум çĕршывĕ виçесĕр аслă, — пуçларĕ сăмахне Витĕркуран, — урлăш-тăршшĕне чупса çаврăнма пултаракан çилхăван çут тĕнчене килмен-ха.

— Тĕрĕс калатăн, — терĕ патша каппайланса.

— Ваксум патшин мулĕ те сумсăр нумай. Ăна шута илме пултаракан сумçă çут тĕнчере çук халĕ.

— Тĕрĕс, — патшапа пĕр саслăн ун сăмахĕсене ырларĕç чыславçăсем те.

— Анчах Ваксумăн виçесĕр аслă çĕрĕ-шывĕнчен, сумсăр нумай мулĕнчен çывăх вăхăтрах нимĕн те юлмасть. Çак сăмаха эпĕ мар, патша ал шăллийĕ çинчи çыру калать.

Янтрама Тӳремре шăп. Унти пин-пин çын Витĕркурана сывламасăр итлет.

— Ваксум мулĕ çилпе вĕçĕ, çĕрĕ-шывĕ пайăн-пайăн вакланĕ, сакăр енне саланĕ. Çак хăрушă ахăр самана Хӳреллĕ Çăлтăр хӳрипе çапса хур кăтартнăран...

Йăвашук пуçланă шухăшне каласа пĕтерейменрĕ, çĕнĕ тум чыславçисем хушшинче арăш-пирĕш пăтрашăну пуçланчĕ. Тĕнче пĕтнĕ вăхăт чăн-чăнах çитрĕ тейĕн. Йăпăр куçлă Йăпăлтик кĕрĕк айне пытанчĕ. Ахрăм саслă Ахăлтик çăвара шыв сыпнă пек, пĕр сас-чӳ те кăлармасть. Пăшатан пек Шăршпĕлен читлĕхре, ристансен ĕречĕ хыçĕнче, хӳтлĕх тупрĕ. Ырми-канми Ырлавçă пуçне ниçта чикеймест. Ăшталанчăк Ăшкалькин шăвшавпа усă курса мул арчине çаклатрĕ, ташлама айне пытанчĕ. Ытти чыславçăсемпе кĕрĕс-мерĕс кĕлеткесем ăçта кайса çухалнине никам та курса юлаймарĕ.

Ташлама Сăртлам çинче Ваксум патши Каппайшах пĕчченех тăрса юлать, хурахлатса кăшкăрать, хăлха çупса сиккелет. Хура халăх кĕр! кĕрлет, Витĕркуран сăмахне кĕтет. Шăв-шав иртсен Йăвашук пуçăннă шухăшне каласа пĕтерчĕ:

— ...Пăтăрмахлă самана Хӳреллĕ Çăлтăр хур кăтартнăран мар, Ваксум патши этем чысне ваккăн-ваккăн сутнăран пулĕ.

Хура халăх кĕр! кĕрлет. Ваксум патши сиккелеме чарăнать, шăпăрттин хытса тăрать.

— Ал шăлли çине мĕн çырнă? — ыйтать халăх.

Йăвашук йăлăнтармасть. Вăл патша хулĕ çинчен ал шăллие илет те халăха курăнмалла саркалать. «...Ют пурлăха ăмсансан

ырлăх мар — тип шар куран. Тĕнче аслă — пурин валли те унта вырăн çитет», — вулать Йăвашук тĕреллĕ çырăва. Унтан вăл, хĕрӳленнĕскер, халăх енне çаврăнчĕ те каласма пуçларĕ:

— Халăх! Çут тĕнчере Сумсăр Сăвăçпа Упаç валли те вырăн пулмалла. Сăвап çырăвĕ çапла вĕрентет. Ирĕклĕх!

— Ирĕклĕх! Ирĕклĕх! — кĕрлерĕ халăх. Хăватлă сасă ахрăмланса Янтрама Тӳрем талккăшĕпех саланчĕ.

Хатăрланнă халăх хушшинчен хăюллă çынсем тухрĕç те тимĕр читлĕхе уçрĕç, Сумсăр Сăвăçпа Упаçа сăнчăртан вĕçертрĕç. Тыткăнçăсем ирĕклĕхе туйса халăх хушшинче çухалчĕç. Йăвашук та вĕсенчен юлмарĕ.

— Пăлхав! — кăшкăрчĕ Каппайшах тăна кĕрсе.

— Тытăр пăлхавçăсене! — хушрĕ Ахăлтик.

Пĕр самантрах кĕрĕс-мерĕс кĕлеткесем тупăнса килчĕç. Пăлхавçăсене шырарĕç — тупаймарĕç. Вĕсем хура халăх хушшинче çĕр çăтнă пек çухалчĕç. «Айвансем кăна вĕсем — Кайри Каюкассисем. Пуç çĕклесен малашне çутă кун та кураймĕç, патак айĕнчен тухаймĕç», — терĕç шаннă çыннисем патшана лăплантарса.

**Тăххăрмĕш сыпăк**

## КАМСЕМ ВĔСЕМ, АЙВАНСЕМ, КАЙРИ КАЮКАССИСЕМ?



Кĕрĕс-мерĕс кĕлеткесем пăлхавçăсене чылайччен шырарĕç, Ваксум çĕршывне йăлт айăн-çийĕн çаврăчĕç. Чапкассинче чавкăна-чавкăна чакаланчĕç, Сумкассинче супăна-супăна сулланчĕç, Мулкассинче мурилисем пек муталанчĕç, анчах таркăнсене тупаймарĕç. Юлашкинчен Пăшатан пек Шăршпĕлен эшкерĕ Кайри Каюкассине те урăм-сурăм пăтратрĕ: аслăк айĕнчи ай сарăма арăш-пирĕш аврăштарчĕ — пăлхавçăсем çук. Пушă алăпах таврăнчĕç йĕрлевçĕсем патша патне.

Йěрлев ăнманнине кура Ваксум патши Каппайшах çěр хутах хушу кăларать: «Çěршывăн мěнпур кěтесěсене аршăнан-аршăнăн шăршласа, пăшатанпа йěплесе тухмалла. Кирек мěн пулсан та пăлхавçăсене тытмалла, читлěхе хупмалла».

Пăшатан пек Шăршпěлен кěрěс-мерěс кěлеткесене ертсе илěмтилěмех патша хушăвне пурнăçлама кайрě. Ваксум çěршывěнче шăп-шăпăрттин ухтару пуçланчě.

Таркăнсем çак вăхăтра халăх хўтлěх панипе чăрăш чатăрě айěнчи шăпкан пек шăпăрт ларакан çурта пытанчěç. Кил хуçи вěсене пăчăркка пек чăлана шăнăçтарчě. «Пўлěмě тăвăр та, калаçма ирěк пулě», — терě вăл.

Тинех хайхисем — арăш-пирěш пăтăрмах паллаштарнă виçě тус: Сумсăр Сăвăç, Кěре Кăмăллă Упаç тата Йăвашук — пурте пěрле кăмăлěсене ирěке ярсах калаçма пултарчěç. Калаçăва Сумсăр Сăвăç кěвěллě те уçă сасăпа пуçларě:

> Чун-чěре кěвvине ирěке янă чух
> Манашкал телейли тěнчере пулас çук.
> Ятăм Сумсăр, çапах сумсăр мар, чăн сăмах!
> Ěненетěп сăмах хăватне яланах.

— Эпě ěненместěп, — тўркессěн пўлчě сăвăçа Упаç ун еннелле лўпперрěн çаврăнса. — Уйрăмах сăмах хăватне ěненместěп эпě. Акă манăн хăват, пурне те ěнентерме, тăна кěртме пултараканни.

Упаç çак сăмахсене каланă чух алă арманě пек чышкине чăмăртарě. Тăрăлтатсах чěтрекен мăйăхě вăл хытах пăлханнине систерчě. Унăн хулăн сасси сулăмлăн янăрарě:

— Манăн сăмах татăклă та кěске. Эпě Сумсăр пек кěвěллěн калаçма пěлместěп, анчах каламасăр чăтаймастăп тўрккес сăмахăма. Малтан хам та этем ăраттине, хитре сăмахсем калама пěлекенскерне, упа ăраттинчен ăслăрах пуль теттěм. Халě пăхатăп та — ăсли-мěнли пěрех. Ăса пула тип шар курса ларатпăр-иç. Чапланатпăр, ашкăнатпăр, пěр-пěрне асап яратпăр. Йăлтах сăмах пулăшнипе. — Упаçăн кўтсе çитнě кăмăлě çаврăнчě пулас. Юлташěсем хăй çине юратса пăхнине курсан мăйăхě чěтреми пулчě, пăлханни иртсе кайрě: — Асатте пиркиех калатăп-ха, — тăсрě сăмахне вăл йăвашланнă сасăпа, — хăй ăссăрлăхне пулах пěтрě асаттем. Çын сăмахне ěненнипех.

— Епле апла?

— Каласа пар-ха, — ыйтаççӗ юлташӗсем.

— Этем ӑраттине питӗ хисепленӗ манӑн асатте. Такам вӑрманта кӑвайтӑ чӗртсе хӑварнӑ — манӑн асатте сӳнтернӗ. Этеме тем тӗрлӗ те ырӑ тунӑ вӑл: çӗтсе каякана çул кӑтартнӑ, инкек куракана пулӑшнӑ. Анчах этем ӑратти унӑн ырӑ кӑмӑлне аса илмен — тытнӑ та тирне сӳнӗ. Ӑс-тӑна уçрӗ çакӑ: эпӗ ӑслӑ сӑмах калакансене ӗненместӗп. Ӑслӑ сӑмах калакан ырӑ чунлӑ тенине пӗлтерместь. Эпӗ хамӑн вӑй-хала ӗненетӗп. Тӳрккес пулин те — хамӑн.

Йӑвашук тусӗсене кӑмӑлласа итлерӗ. Унтан хӑй те калаçӑва хутшӑнчӗ:

— Эпӗ ӗненекен хӑват — юрату. Инçе çула та уншӑнах тухрӑм.

Йӑвашук патшаран тытса илнӗ ал шӑллине хӗвӗнчен кӑларса кӑтартрӗ:

— Акӑ вӑл манӑн чиперукӑн ӗçӗ. Кунта унӑн сӑнӗ те пур.

Пурте ал шӑллине тинкерчӗç. Ӑна тӑваткал тӗрӗпе тӗрленӗ. Тӑваткал тӗрӗ варринче илӗртӳллӗ ӳкерчӗк пур. Ӳкерчӗкрен куç каймасть, мӗншӗн тесен тӗрринче ик куç тулли хӗр ларать. Пичӗ-куçӗ хӗвел пек, тути чие çырли пек. Мӑшӑр куçӗ йӑлтӑркка, калӑн, янкӑр тӳпери тӗлӗнтермӗш Тӳпекуç.

— Пурӑнать çак хӳхӗм хӗр Каппайшах тыткӑнӗнче. Епле вӑй-хал çитерес ӑна çӑлса кӑларма? — пӑшӑрханчӗ Йӑвашук.

— Сӑмах хӑвачӗ пур чухне юратушӑн тыткӑн çук, — пулӑшма пулчӗ ӑна Сумсӑр Сӑвӑç.

— Упа ӑраттин тӳрккес вӑйӗ те кӗрешӳре ытлашши пулмӗ, — терӗ Упаç.

Çапла чун уççи калаçу хыççӑн виçӗ юлташ пӗр ӑс тытрӗ: вӗсем виçӗ хӑвата пӗрлештерсе тыткӑнри хӗре ирӗке кӑларма хатӗрленчӗç. «Ӗнтӗ ирччен канса илни те пӑсмасть», — текелесе таркӑнсем ыйха путрӗç.

Анчах ӗç-пуç яланах шухӑшланӑ пек пулса пымасть. Çак вӑхӑтра ухтаруçӑсем, кӗрӗс-мерӗс кӗлеткесем, чӑрӑш айӗнчи шӑпкан пек çурта вирхӗнсе кӗчӗç. Вӗсем тӗлӗрекен таркӑнсене çӑмӑллӑнах тытрӗç, алли-урисене пӑркӑчларӗç те патша патне çитерчӗç. Йӑвашукӑн ӗнчӗ-пӗнчӗ пиçиххине те, тӗрӗллӗ ал шӑллине те тӑпӑлтарса илчӗç.

Вуннӑмӗш сыпӑк

## ИРӖКЛӖХЕ САКЛАТ ХУНИ



Ҫутӑ аслӑ керменте Ваксум патши Каппайшах тарқӑнсемпе калаҫрӗ:

— Сумсӑр Сӑвӑҫ, эсӗ-и ирӗклӗх ыйтаканни? Мӗнех. Патша кӑмӑлӗ виҫесӗр аслӑ — тивӗҫтерӗп ыйтнине. Пулӑн эсӗ ирӗк ҫын, ятлӑ-сумлӑ, пуян ҫын. Анчах пурӑн малашне патша хушнӑ йӗркепе. Сӑмах вӑй-хӑватне мар, тайма пуҫа мала хур.

Сумсӑр Сӑвӑҫ сумлӑн пычӗ Каппайшах умне утса, янӑрарӗ уҫӑ сасӑ кермене чӗтрентерсе:

Сӑмах хӑвачӗ нихҫан
Чыса мулпа ылмаштарман,
Путсӗрсемпе пасар туман,
Ирӗклӗхе кивҫен ыйтман!

Шута илмерӗ Сумсӑр Сӑвӑҫ Ваксум патши каланине. Шӑнкӑрав сас парсанах патшан шаннӑ ҫыннисем Сумсӑр ҫине сикеҫҫӗ, ӗнселесе илеҫҫӗ.

— Тӑпӑлтарӑр чӗлхине! — хушрӗ чуна ҫурасла Ахрӑм саслӑ Ахӑлтик.

Кӗрӗс-мерӗс кӗлеткесем сӑвӑҫ чӗлхине тӑпӑлтарса илеҫҫӗ.

Упаҫ енне куҫ ывӑтса тӑсать патша хӑй ӗҫне:

— Упа ӑраттине те кирлӗ-им-ха ирӗклӗх? Патша кӑмӑлӗ виҫесӗр аслӑ — тивӗҫтерӗп ыйтнине. Пулӑн эсӗ ирӗк ҫын, ятлӑ-сумлӑ, пуян ҫын. Анчах пурӑн малашне патша хушнӑ йӗркепе. Упа вӑйне-халне мар, тайма пуҫа мала хур.

Упаҫ лӳпперрӗн, танлӑн пычӗ Каппайшах умне утса, янӑрарӗ хулӑн сасӑ кермене чӗтрентерсе:

— Упа ӑратти ялан тӗплӗ тӑвать хӑй ӗҫне, вӑл нихҫан та пуҫ таймасть путсӗр-тӗпсӗр йӗркене.

Шута илмерĕ-çке Упаç Ваксум патши каланине. Шăнкăрав сас парсанах патшан шаннă çыннисем сиксе ларчĕç ун çине. Йытă çимен патака çитереççĕ этеме.

— Тайма пуçа хĕç витмест, каçăр пуçа хулă та питĕ аван витерет. Хĕнĕр чунĕ тухиччен! — хушрĕ çиллес сасăпа Йăпăр куçлă Йăпăлтик.

Кĕрĕс-мерĕс кĕлеткесем Упаçа ăнран кайиччен хĕнеççĕ.

Чуна илмĕш хай черет çитрĕ Йăвашук тĕлне.

— Витĕркуран, эсĕ те ирĕклĕх ыйтатăн-и? Патша кăмăлĕ виçесĕр аслă — тивĕçтерĕп ыйтнине. Пулăн эсĕ ирĕк çын, ятлă-сумлă, пуян çын. Анчах пурăн малашне патша хушнă йĕркепе. Ирĕк ăс-хакăла мар, тайма пуçа мала хур.

Пычĕ çирĕппĕн утса патша умне Йăвашук, куçран пăхса каларĕ:

— Эпĕ Ваксум патшин кăмăлĕ еплерех пулнине витĕрех куратăп. Çавăнпа нимĕн те ыйтмастăп. Ирĕклĕхе саклат паратăп. Ун вырăнне мана йăх аслашшĕн парнине, ĕнчĕ-пĕнчĕ пиçиххине тавăрса парăр.

Шута илмерĕ Йăвашук Ваксум патши каланине. Шăнкăрав сас парсанах патшан шаннă çыннисем Йăвашук çине сикеççĕ, тӳпкелесе илеççĕ.

— Çăлтăр куран куçне пăшатанпа шăтарăр, ун çийĕн çăлтăрсăр тӳпе хуçалантăр, — хушрĕ вĕчĕх сасăпа Пăшатан пек Шăршпĕлен.

Кĕрĕс-мерĕс кĕлеткесем Йăвашук куçне пăшатанпа чиксе шăтараççĕ. Унтан таркăнсене виççĕшне те тимĕр читлĕхе пăрахаççĕ. Шăп-шăпăрттин хушу пурнăçа кĕчĕ.



Вун пӗрмӗш сыпӑк

## ТЫТКӐНҪӐСЕН АЛӐКӖ КӖРЕС ПУЛСАН ХАПХА ПЕК, ТУХАС ПУЛСАН — ЙӖП ҪӐРТИ

Йӑвашук тӑна кӗчӗ. Ух, сивӗ те! Каччӑ пӗтӗм кӗлеткипе сиксе чӗтрет. Хӑй ӑҫтине тавҫӑрса илме тӑрӑшать. Тавралӑха сӑнать. Нимӗн те курмасть. Пӑч тӗттӗм… Чим, тӗттӗм те мар-тӑр… Вӑл суккӑр-ҫке. Суккӑр! Унӑн вичкӗн куҫӗ ҫук текех.

«Пӗтерчӗҫ йӗксӗксем. Ҫӗр ҫӑтманскерсем. Эх, малашне мӗнле пурӑнмалла-ха? Арӑслансене нӑхталасси те, пиллӗхлӗ ҫыру тӗррине вуласси те пулас ҫук ӗнтӗ. Кама кирлӗскер эпӗ?»

Йӑвашук ура ҫине тӑчӗ, аллисемпе хыпаласа ута пуҫларӗ. Алла тимӗр хулӑ кӗрет. Тимӗр шӑтӑрнак. Сӑнчӑрсем. Акӑ вӑл хупӑ алӑк тӗлне ҫитрӗ. Тыткӑнра иккен… Юлташӗсем те пур. Пӗри хытӑ хӗнесе пӗтернӗрен халӗ те тӑна кӗреймен-ха, теприн чӗлхи ҫук.

Шӑплӑх. Хӑрушӑ та сивӗ шӑплӑх хуҫаланать читлӗхре. Йӑвашук йывӑр шухӑшсемпе асапланать. Тыткӑн… Мӑшкӑл… Ӗмӗрлӗх тӗттӗм каҫ…

Эх, мӗн тумалла? Ӑш вӑркавне епле чармалла? Ҫӑлӑнасси пулмасть пулӗ ҫак асапран… Тыткӑнҫӑсен алӑкӗ кӗрес пулсан хапха пек, тухас пулсан — йӗп ҫӑрти.

Вун иккӗмӗш сыпӑк

## КАЛЛӖ-МАЛЛӖ ШУХӐШЛАВ



Тыткӑнҫӑсене тимӗр читлӗхе хупнипе Каппайшах ӗҫ-пуҫӗ пӗртте лайӑхланмарӗ. Лайӑхланма мар, пӗтӗм ҫӗршыв хӑрушлӑха кӗрсе ӳкрӗ. «Янтӑ мул ярать тип шар», — тени

тӳрре килчӗ пуль, виҫесӗр аслӑ та сумсӑр пуян Ваксум ҫӗршывӗ ҫине вӑрҫӑ-хура хаярӗ ӳкрӗ, урӑм-сурӑм аркатма, айӗнҫийӗн ҫавӑрма пуҫларӗ. Ҫак арӑш-пирӗш пӑтӑрмахлӑ ӗҫ ҫинчен йӗркипе каласа парам-ха эппин.

Капӑр патша, Каппайшах, ҫӗнӗ тум чыславӗпе аппаланнӑ вӑхӑтра Тӗнче каскӑнӗ Кастимӗр Ваксум ҫӗршывӗн мул-туприне ӑмсанса хӑй аллине ҫавӑрса илме шутланӑ. «Ваксум ҫӗршывӗ виҫесӗр пуян. Ун ҫуррине памасан мӗнпур мулӗ ҫук пулӗ, сакӑр енне саланӗ», — ҫапла хыпар янӑ тет Каппайшах патша патне Тӗнче каскӑнӗ Кастимӗр. Ун вӑйпучӗ Катӑрман пулкки-пулккипе ҫар ярать. Ҫар кӑралӗ тимӗртен, салтакӗсем чунсӑр тет. Пурте тимӗр кӗпепе тимӗр калпак тӑхӑннӑ, йӗнерленӗ хурҫӑ ут. Аллисенче хӗҫ-пӑшал вылянать енчен енне, кӗпҫесенчи пилсӗр вут кисрентерет тӗнчене.

Ваксум патши Каппайшах путрӗ тарӑн шухӑша. Ҫӗршыва ҫак каскӑнран епле майпа ҫӑлмалла? Халӑхпа канашлама тухрӗ вӑл пуҫне чиксе Ташлама Сӑртлам ҫине. Патша хыҫҫӑн шӑкӑрин утрӗҫ шаннӑ ҫыннисем. Питлӗхҫапкӑч Тункӑрхун вӑрҫӑ кӗвви янӑратрӗ, параппанлӑ Тукмакбаш ҫапӑҫу хирне васкатрӗ. Халӑх кӑмӑлне хытарчӗ. Ҫӗршывра каллӗ-маллӗ шухӑшлав пуҫланчӗ.

Чӗнсе калать Каппайшах:

— Эй, хура халӑх! Хӑрушӑ вӑхӑт ҫитрӗ. Тӗнче каскӑнӗ Кастимӗр вӑрҫӑ-харҫӑ тапратрӗ. Пур йышпа пӗрле тӑрса каллӗ-маллӗ шухӑшлар. Хӑрушлӑхран хӑтӑлма май тупса сӑмах татар — пур йышпа пӗр ӑс тытар.

Сӑмах илет чи малтан Ахрӑм саслӑ Ахӑлтик:

— Хура халӑх! Чӑн сӑмах! Ҫӑлӑнӑҫ тени пурах. Кастимӗре чарӑпӑр. Пӗр чӑмӑра пӗрлешсе, пӗр харӑссӑн кар тӑрса ҫичӗ юта ҫапӑпӑр!

Анчах Ваксум ҫӗршывӗнче халӑха кар! ҫӗклеме тупӑнмасть сӑмах хӑвачӗ. Ахӑлтике шанма ҫук — кирлӗ урӑх йышӑну.

Сӑмах илет Йӑпӑлтик:

— Хура халӑх! Чӑн сӑмах! Ҫӑлӑнӑҫ тени пурах. Кастимӗрпе кӗрешме улӑп вӑйӗ тупӑпӑр. Ытах вӑй-хал ҫитмесен вӑрҫӑ-хура хаярне ҫырлахтарса пӑхӑпӑр, кучченеҫсем ярӑпӑр.

Анчах Ваксум ҫӗршывӗнче Кастимӗрпе кӗрешме тупӑнмасть хӑватлӑ улӑп. Парне-кучченеҫ хакне хура халӑх чухлать-ха —

йалт ун пӳлминчен тухать, выҫлӑх вӑхӑчӗ килет. Йӑпӑлтике шанма ҫук — кирлӗ урӑх йышӑну.

Тухать сӑмах калама Пӑшатан пек Шӑршпӗлен:

— Хура халӑх! Чӑн сӑмах! Ҫӑлӑнӑҫ тени пурах. Кастимӗрпе кӗрешме пурте вичкӗн ӑс тытар.

Анчах Ваксум ҫӗршывӗнче Кастимӗрпе кӗрешме вичкӗн ӑслӑ ӗмпӳ ҫук.

Хастар халӑх ӑс-тӑнне эрешлесе ҫырни пур: ӗнчӗ-пӗнчӗ пиҫиххи, тӗлӗнтермӗш ал шӑлли. Ҫав ҫырӑва вулама витӗркуран куҫ ҫук.

Хура халӑх кӗр! кӗрлет, вӑрман евӗр хумханать:

— Витӗркуран!

— Упа ҫын!

— Сумсӑр Сӑвӑҫ! Ӑҫта эсир?!

Хура халӑх шавлани патшана шиклентерет, Тӗнче каскӑнӗ юнани пуҫран сӗрӗм кӑларать — тимӗр читлӗх алӑкне уҫма тивет ирӗксӗр.

**Вун виҫҫӗмӗш сыпӑк**

## ХАЛӐХРАН ӐСЛӐ ТА, АСЛӐ ТА ПУЛАЙМӐН



Йывӑр тимӗр хупӑнча йӗре-йӗре уҫӑлсан ушкӑн ҫын кӗпӗрленсе кӗчӗ тимӗр читлӗхе. Кай-кай-кай, ӑнран ан кай! Мӗн кӑна ҫук-ши кунта ристансене хӗн кӑтартма? Касмӑкӗсем майкӑчлӑ, ҫапкӑчӗсем пӑркӑчлӑ, тапкӑчӗсем таканлӑ... Пӑлхавӑр йыш хатарланса тасатрӗ чӑрмавсене: касмӑксене катӗртрӗ, ҫапкӑчсене пӑвӑртрӗ, тапкӑч ӳпне йӑванчӗ...

Хастарсем ҫула уҫса тыткӑнҫӑсем патне ҫитеҫҫӗ. Чӗмсӗр-сумсӑр Сӑвӑҫа, вӑйран кайнӑ Упаҫа тата суккӑр Йӑвашука — виҫҫӗшне те умлӑн-хыҫлӑн Янтрама Тӳрем ҫине ҫӗклесе илсе тухаҫҫӗ.

Хура халăх кĕпĕрин! вĕсем тавра сырăнать. Ак япала! Эй тĕнче! Тыткăнçăсем читлĕхре тухнă сусăр-пўсĕре. Этем ĕренки юлман. Эй-хе-хей! Мĕн тумалла? Мĕнле мехел çитерес ура çине тăратма ăншăрт çапнăскерсене...

Хура халăх ăслă çав, пуринчен те аслă çав. Имлĕх, сиплĕх, ăрăмлăх, юратупа чăтăмлăх — пурнăça сыпăнтаран тĕрлĕ-тĕрлĕ юп кўрĕм çителĕклех халăхăн. Акă çынсем кĕпĕрин çула уçса сирĕлчĕç, виçĕ енне сирĕлчĕç. Хура халăх хушшинчен юппи-юппи çул килет, хура вăрман тейĕн çав. Юппи-юппи çул килсе виçĕ юппа пĕрлешет.

Сылтăм енчи юппинчен ватти çитнĕ — шур сухал, лăкăш-лăкăш Ништухтăр — кăштăртатса çывхарать. Имлет, сиплет, чĕм кĕртет — Сумсăр Сăвăçăн чĕлхи ўте кĕрет, сыпăнать. Сăмах-юмах калама юмарт чĕлхи уçăлать.

— Ырă сунса калаçсан çĕкленет чĕлхўн ят-сумĕ. Çил чуппи те тинĕс хумĕ евĕр янăрĕ, саланĕ вăл çак аслă тĕнчере, Кастимĕрпе кĕрешме халăха кар! çеç тăратĕ. Хаяр сунса калаçсан çухалать им-пархатар, — терĕ те Ништухтăр кĕчĕ хура халăх хушшине.

Сулахай çул юппинчен чăмăр питлĕ Чăтăмкка — кĕре сăнлă Шураппа — вашлаттарса çывхарать. Имлет, сиплет, чĕм кĕртет — Упа çынна сыватать.

— Тĕрĕслĕхшĕн кĕрешсен Упаç улăп малашне вĕр çулăм пек хĕрўллĕн, çап чăмăр пек хăватлăн, ян тимĕр пек янравлăн çўрĕ аслă тĕнчере. Пĕтĕм хура халăха хўтĕлеме пултарĕ. Хур шухăшпа сăхлансан çухалать им-пархатар, — терĕ Чăтăмкка аппа, кĕчĕ халăх хушшине.

Варринчи çул юппинчен тевет çакнă Тивлетпи, пĕве çитнĕ хĕр, килет. Утти-утти — шыв юххи, яру ярăнса утать; кулли-кулли — сар хĕвел, йăлтăр çиçсе йăлкăшать. Хĕрĕн мăшăр аллинче чĕнтĕрленĕ ал шăлли, ĕнчĕ-пĕнчĕ тĕрĕлли. Хĕр ярăнса пырать те тĕрĕллĕ ал шăллипе суккăр каччăн юнăхнă куç хупанкине ачашшăн виçĕ хутчен сĕртĕнет. Йăвашук куçне уçать.

— Юрату тивлечĕпе тĕнче çине тинкерсен малашне эс чăннипех витĕр курма пуçлатăн, ача-пăча ыр курса пĕр ярпайса ўсмешкĕн хăтлă пурнăç йĕркелен. Ултавпа ăссăрлансан çухалать им-пархатар, — терĕ хўхĕм Тивлетпи.

Каласа пама сӑмах, ҫырса пама хут ҫитес ҫук Йӑвашукӑн савӑнӑҫне палӑртма. «Тем тӗрлӗ терт-нуша курса тупнӑ телейпе вӑл нихӑҫан та ӑссӑрлӑх вӑйӗн выляс ҫук», — ҫапла шухӑш-кӑмӑлпа хавха илнӗ Йӑвашук куҫ тулли хитре хӗре ытама илме ӑнтӑлчӗ. Анчах хӗр куҫран тинкерчӗ.

— Тӑванӑм, кам эсӗ? Туйӑмсен тарҫи е юп кӳрӗм хуҫи? Юрату туйӑмӗ пит хӑватлӑ пулсан хӗрӳллӗн ҫунтар тӑшмана унпалан. Халь ҫӗршыв инкекре! Ун шӑпи сирӗнте — виҫӗ хӑват аллинче, — терӗ те ҫухалчӗ хӗр хура халӑх хушшинче.

**Вун тӑваттӑмӗш сыпӑк**

## ВИҪӖ ХӐВАТ ПӖРЛЕШСЕН



Хура халӑх имӗпе, ӑсӗпе, пехилӗпе хӑват илнӗ юлташсем: ҫӑлтӑр куҫлӑ Йӑвашук, улӑп пӳллӗ Упа ҫын тата юмарт чӗлхеллӗ Сӑвӑҫ — виҫҫӗшӗ пӗр кӑмӑллӑн пӗтӗм халӑх ыйтнипе сӑхӑ тӑшманпа ҫапӑҫма тухрӗҫ Тискер Уй хӗрне. Йӑвашукӑн куҫӗ Тӳпекуҫ пек ялкӑшрӗ, уй-уй урлӑ тинкерчӗ, витӗр курма пултарчӗ ҫич ҫухрӑмри тӑшмана. Кӗре кӑмӑллӑ Упаҫӑн вӑйламас чӑмӑрӗсем чукмарланса выляНчӗҫ, енчен енне вӑйкӑнчӗҫ. Сумсӑр Сӑвӑҫӑн сасси ҫулу ҫапса чӗртнӗ пек вутлантарчӗ халӑха, кар! ҫӗклерӗ ҫапӑҫма.

Уй-уй урлӑ карӑнса тӗтӗм-сӗрӗм явӑнать, Тискер уя капланать. Тискер уй талккӑшӗпех тӗнче каскӑнӗ Кастимӗр йышлӑ ҫарӗпе килет. Ун вӑйпучӗ Катӑрман алчамуй куҫне чарса урлӑ-пирлӗ тинкерет. Мӗн курнине ҫунтарать, ҫунманнине аркатать. Кастимӗрӗн аллинче тӑхлан ҫыхнӑ саламат виҫӗ вӗҫлӗн явӑнать. Ун пӗр вӗҫӗ ҫынсене майран пӑвса вӗлерет, тепри вӑтаран касать, виҫҫӗмӗшӗ ураран йӑлмакласа сӗтӗрет. Чӗн пушӑран юн тумлать, хура халӑх еннелле ункӑн-ункӑн ҫаврӑнса, ҫӗлен пулса явӑнать.

Çакна курнă Йăвашук пĕтĕм пĕвĕ-сийĕпе асса-тĕссе кайрĕ те хаяр çулăмĕпе хĕрелчĕ. Тĕнче каскăнне пуç таймĕç Пихампар таврашĕсем.

— Асса! — терĕ Йăвашук йăх-ăру тивлечĕпе. Хаяр сунан усала йăвантарĕ йăвашши, асра-пилте пулас çук çичĕ ютран хăрасси.

— Ур-ра! — сас пачĕ харсăр Сăвăç Йăвашукпа пĕр кăмăллăн. Сăмахĕ юхрĕ кĕвĕллĕн:

Уй-уй урлă — Тискер уй.
Тискер уйăн чикки пур.
Хаяр сунан, ан сăхлан —
Уй чиккин те урлав пур.

— Шапаш! — терĕ Упаç та тусĕсенчен юлмасăр. — Пилсĕр вăрă-хураха хăлха чикки парас мар — çĕрте утса çӳрес мар!

Такам (курса пулмарĕ) Упаçа хулккан тăхăнтартрĕ, вăйлă, çирĕп аллисене хĕçпе кистен тыттарчĕ. Мехел çитрĕ: ай-вай-вай, улăп пӳллĕ Упа çын çапăçăва ыткăнчĕ, енчен енне вăйкăнса кăралне вылятрĕ вирлĕн. Хĕçĕ çиçĕм пек çиçсе Кастимĕре кастарчĕ, аслати пек кистенĕ Катăрмана катĕртрĕ. Халăхран тухнă хастарсем пĕртте унран юлмарĕç — çапăçура çапкăч пек, кĕрешӳре кĕреш пек çичĕ ютпа тытăçрĕç.

Йăвашукăн куçĕ вăрçă-хурах хаярне витĕр курма пултарни кĕрешĕве питĕ шеп йĕркелеме пулăшрĕ. Халăх кăмăл-туйăмне ĕнĕçӳллĕ пĕр кĕвве — тикĕс утăм юррине — шăнăçтарма пултарнишĕн хавал тухрĕ Сăвăçа та: Сумсăрăн хавха сăмахĕ хастарсене сатурлантарчĕ, кĕрешĕве хĕтĕртрĕ.

Харăс тăнă хастарсем хапха юпи пулмарĕç, тимĕр урлав пулчĕç-тĕр. Тискер уйри урнă çар сиреймерĕ урлава, кĕреймерĕ хулана. Хайхи-майхи хастарсем çапăçура хĕрнĕçем Упа çынпа танлашрĕç — сăх тăшманпа çапăçрĕç.

Ваксум çĕршывĕ чапне çĕре ӳкермерĕ, паттăрсене çапах та чылайăшне çухатрĕ.

Тĕнче каскăнĕ Кастимĕр Ваксум халăхĕ çапла каррăн та хастаррăн çапăçасса кĕтменччĕ. Вĕçсĕр-хĕрсĕр аслă çĕршывăн вăрман пек йышлă халăхĕ ун умне чĕркуçленессе, сумсăр нумай тупри хăй аллине лекессе кĕтнĕччĕ. Анчах каскăн ĕмĕчĕ пурнăçа

кĕмерĕ: пилсĕр-путсĕр çак эшкер хастарсене чăтаймарĕ, арăш-пирĕш арканчĕ. Аслă çар юлашкисем е тапаççĕ кай енне, е чăмаççĕ тĕм хыçне. Тĕнче каскăнĕ Кастимĕр пуçран сĕрĕм кăларсах каялла чакма пуçлать, пилсĕр ĕмĕт тулманнишĕн хăрăнса, халсăрланса, çичĕ хут хаярланса тĕнче тăрăх суллать. Ун вăйпучĕ Катăрман, алчамуй куçне çавăрса, катăкпăсăк шакăрча пулса ӳкет çĕр çине.

— Çапла пулнă ĕмĕртен, пиллĕх Çĕрпе Тӳперен, — тет сатуррăн Йăвашук. — Асра тыттăр çичĕ ют: ямăттине хапсăнсан пуррине те çухатан!

— Сăмах вăйĕ асамлă, халăх вăйĕ сулăмлă, — тет ятуллăн Сăвăç та. Пĕлĕм пиçнĕн сăвă та чĕлхе вĕçне килейрĕ:

Уй-уй урлă — Чипер уй.
Чипер уйăн чикки пур.
Ырă сунан, ан кулян —
Туслă вăйă карти пур.

Çемĕленĕ сăмахсем асамлăхне кăтартрĕç — арăш-пирĕш тĕркешӳ вăйă картине çутатрĕ.

— Ару, — терĕ Упа çын, — вăрçă пĕтнĕ те иккен. Çар кăралне хурам-ха, хам та вăййа тухам-ха.

Виçĕ хăват пур чухне пурăнатпăр ырлăхра.

**Вун пиллĕкмĕш сыпăк**

## СУТĂ ĔМĔТЛИСЕН ÇĔРШЫВĔ ЙĔРКЕЛЕННИ



Çитрĕ пурте кĕтнĕ кун, çитрĕ Аслă çĕнтерӳ. Аслă Ваксум çĕршывĕ йăлт тасалчĕ тăшманран.

Янтрама Тӳпем тулли тĕрлĕ халăх хĕвĕшет. Чаплисем те, сумлисем те, Кайри Каюкассисем те — пурте пĕрле пухăннă, пĕр кăшăла çаврăннă, Çĕнтерӳ уявĕ пуçланасса кĕтеççĕ. Питлĕх-



çапкăч Тункăрхун çĕнтерӳ кĕвви янратрĕ, пăнтăр-пăнтăр Тукмакбаш параппанĕпе панлаттарчĕ, халăха уява йыхăрчĕ.

Ташлама Сăртлам çине Сумсăр Сăвăç, Упаç тата Йăвашук танлăн, сумлăн, курăмлăн ярăнса утса тухаççĕ. Пĕтĕм халăх вĕсене тав тăвать, чыса хурать: халиччен сумсăрланса çӳренĕ сăвăç сумлă ята тивĕçет, упа ăраттинчи çынна Упаç паттăр теме пуçлаççĕ, Йăвашука хăй чунтан ыранă Тивлетпие тупса параççĕ.

Çĕнтерӳ уявĕ туйпа ылмашăнать — чаплă кăна туй пулать, çĕнĕ çемье чăмăртанать.

Уяв хыççăн тепĕр кун Ваксум çĕршывĕнче Уй пек Уçă Канаш пуçтарăнать. Çав Канаш ĕçне никама та хутшăнма чармарĕç. Эпĕ те унта пултăм. Йăвашука патшана лартмалла текен йышăну турăмăр. Анчах та ĕç-пуç урăхларах çаврăнса тухрĕ, Уçă Канаш йышăннă пек мар.

— Эпĕ халиччен те Çĕрпе Тӳпе хушшинче хамшăн хам патша пулса çӳренĕ. Çавăнпа мана урăх чап-сум та, трон та кирлĕ мар, — çапла каларĕ те Йăвашук хăй çуралса ӳснĕ вырăна, тахçан авал хурчка сăмсаллă этемккесем аркатнă Парлак ту арки çине кайрĕ. Хĕвел питлĕ Тивлетпи, кирек мĕнле пурнăç нуши-телейне те мăшăрĕпе пайлама хатĕрскер, унран юлмарĕ.

Ачасем, Йăвашук мĕншĕн çапла турĕ тетĕр-и? Сăлтавĕ паллă-çке. Аса илĕр-ха: ăна пĕчĕккĕскерне, Шурă Кашкăр таçта çĕклесе кайнă чух мĕн пулса иртнĕччĕ? Акă мĕн пирки

ёмĕтленнĕччĕ вăл, хăранипе чĕтресе выртаканскер: «Эх, çак кушелккерен тухсанах тăшмансем аркатнă çĕршыва çĕнĕрен чĕртсе тăрататăп...» Вăхăт çитрĕ çак çутă ёмĕте пурнăçа кĕртме.

Парлак ту арки çинче Йăвашук кăмăл туртмăш ёçе тытăнчĕ. Хĕвел питлĕ Тивлетпи каçалăк умне мăшăрĕпе юнашар тăчĕ. Йăвашукпа Тивлетпи ухлĕм пуснă улăха сурăх хӳтерсе тухаççĕ — вăл кĕтӳ пулса кĕрет, ёне çавăтса тухаççĕ — сĕт кӳлли юхса кĕрет. Ёçчен алă тивнипе Парлак ту арки хуралать, вăрлăх ӳкет — шуралать. Тырри хăмăш пек пулать, пĕр пĕрчĕрен пине çитет.

Кĕçех çемьере йыш хушăнать — хĕрпе ывăл çуралать. Тинех кăмăлĕ çаврăнчĕ Йăвашукăн, унăн пархатарлă ёçне — йăх-ăру аслашшĕн хăнкăравлă-чĕнтĕрлĕ пехилне тăсаканĕсем пур.

Çĕрпе Тӳпе халăхĕн пурнăçĕ пуçланать кăна-ха. Шанас килет: Йăвашук йĕркеленĕ Çутă ёмĕтлисен çĕршывĕ çĕнĕрен чĕрĕлсе тăратех.

*Литературно-художественное издание*

Для детей среднего и старшего
школьного возраста

**Николай Ижендей**
**(Петров Николай Петрович)**

**ТӖРӖЛЛӖ ҪЫРУ ТӖЛӖНТЕРМӖШӖСЕМ**

**ЧУДО-ВЫШИВКА**

Повесть-сказка

*На чувашском языке*

Редактор *О.Л.Васильева*
Художник *Е.Енькка*
Художественный редактор *И.Е.Калентьева*
Технический редактор *А.В.Семенова*
Корректор *Н.Г.Ильина*
Компьютерная верстка *А.В.Леонтьева*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93-95 3003. Изд. лиц. № 06317 от 26.11.01. Подписано к печати 02.03.05. Формат 70х90 $^1/_{16}$. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 2,34. Учетно-изд. л. 1,46. Тираж 2000 экз. Заказ № 5169. Изд. № 22.

ГУП «Чувашское книжное издательство», 428019, Чебоксары, пр. И.Яковлева, 13.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия», 428019, Чебоксары, пр.И.Яковлева, 13.